26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 МАРТ 14 ЫТЛАРИКУН 52(6547) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 3-мӗш фронтӑн ҫарӗсем, ДНЕПР шывӗ урлӑ вӑтӑрпа каҫнӑ та БЕРИСЛАВ хулине йышӑнса илнӗ, вара наступлени малалла аталантарса пынӑ, паян, мартӑн 13-мӗшӗнче, урамри ҫапӑҫусем хыҫҫӑн, ХЕРСОН хулине — чугун ҫулсен, шыв ҫулӗсен пысӑк узелне тата нимӗҫсен оборонин ДНЕПР шывӗ вӑррине тӗрекленӗ паха пунктне турта илнӗ.

Ҫапӑҫусене ГРЕЧКИН генерал-лейтенантӑн, РУБАНЮК генерал-майорӑн, МАРГЕЛОВ полковникӑн, ДОРОФЕЕВ полковникӑн ҫарӗсем, артиллери генерал-лейтенанчӗн НЕДЕЛИНАН, артиллери генерал-майорӗн ОСМОЛОВСКИН артиллеристӗсем, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн СВИРИДОВАН танкистӗсем, авиаци генерал-лейтенанчӗн СУДЕЦАН летчикӗсем, инженернӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн КОТЛЯРАН, СЕРГЕЕВ полковникӑн понтонерӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве палӑртса хӑварас тесе майла ХЕРСОНПА БЕРИСЛАВ хулисене ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ХЕРСОНСКИ», «БЕРИСЛАВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе награда тӑратас.

Паян, мартӑн 13-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн столици МУСКАВ, ирӗке ҫирӗм тӑватӑ тупӑран ҫирӗм хут пӗр харӑс пересе, Украинӑри 3-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ХЕРСОНПА БЕРИСЛАВ хулисене ирӗке кӑларнӑ ҫарсене, салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, ХЕРСОНПА БЕРИСЛАВ хулисене ирӗке кӑларас ҫапӑҫусенче пулнисене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑмӑрӑн ирӗклӗхӗшӗн пуҫӗсене хунӑ паттӑрсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи мартӑн 13-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 11-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Мартӑн 11-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе-ҫӗнтерсе тата унӑн контратакисене сирсе-сирсе ярса, ҫаплах ТАРНОПОЛЬ хули урамӗсенче ҫапӑҫнӑ.

ПРОСКУРОВ хули енче пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла тапанса пынӑ, халӑх пурӑнакан 30 пункта турта илнӗ. Вӑл шутра — ЗЕЛЕНАЯ, КРИШТОФОВКА, БАГЛАИ, БОЛЬШАЯ БУБНОВКА, ПЕДОСЫ, МИТИНЦЫ, СЛОБОДА КРАСИЛОВСКАЯ, ГОЛИНКИ, ЗАПАДИНЦЫ, КУЗЬМИН, ПЕЧИСКИ, АРКАДИЕВЦЫ, ДАВИДКОВЦЫ ятлӑ пысӑк ялсем тата КРАСИЛОВ [illegible] чугун ҫул станцийӗсем.

УМАНЬ хулинчен сурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре, хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, Киев облаҫӗнчи ЛАДЫЖИНКА район центрне турта илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта йышӑннӑ. Вӑл шутра — БАЛАБАНОВКА, КНЯЖЕ-КРЫНИЦЯ, КОРЫТНА, ТЕРЛИЦА, НАРАЕВКА, ВЕЛИКАЯ САВУСТЬЯНОВКА, ИВАНГОРОД, КРАСНОПОЛКА, СТРАЖГОРОД, РОССОША, КУЗЬМИНА-ГРЕБЛЯ, ОСИТНА, РЫЖЕВКА, ГОРОДНИЦА, ТЕКУЧА, КРУТЕНЬКОЕ ятлӑ пысӑк ялсем.

КИРОВОГРАД хулинчен сурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла тапӑнса пынӑ, Кирсвоград облаҫӗнчи район центрӗсене — ЗЛАТОПОЛЬ хулине, НОВОМИРГОРОД хулине тата БОЛЬШАЯ ВИСКА ялне турта илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 40 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ЛИСТОПАДОВО, КАМЕНОВАТКА, МАРТЫНОШ, ПАНЧЕВО, МАРЬЯНОВКА, НОВО-АЛЕКСАНДРОВКА, НИКОЛАЕВКА ятлӑ пысӑк ялсем тата ШЕСТАКОВКА, МАРЬЯНОВКА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

КРИВОЙ РОГ хулинчен сурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла туртса илнӗ. Вӑл шутра — ИНГУЛО-КАМЕНКА, БАТЫЗМАН, АЛЕКСАНДРОВКА, НИКОЛО-ГРИГОРЬЕВКА, БОГДАНОВКА, КАШИРОВКА, ТАРАСОВКА ялӗсем тата МАРЖАНОВКА, ТИМКОВО, ВИСУНЬ чугун ҫул станцийӗсем. Пирӗн ҫарсем ДОЛИНСКАЯ чугун ҫул узелӗ патне таччӑнах пырса тухнӑ.

АПОСТОЛОВО хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, Николаев облаҫӗнчи район центрне — БЕРИСЛАВ хулине (ДНЕПРӐН хӗвеланӑҫ енчи ҫыранӗнче) туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 60 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ГОРОЖЕНО, КОНСТАНТИНОВКА, ПЕСКИ, НОВО-ГЕОРГИЕВКА, МИРОВКА, РАВНОПОЛЬЕ, НОВО-ДМИТРИЕВКА, ПЯТИХАТКА, БОРОЗЕНСКИЙ, СУХАНОВА, УЛЬЯНОВКА, МИХАЙЛОВКА, ДРЕМАЙЛОВКА ялӗсем тата БЛАКИТНОЕ чугун ҫул станцийӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка туна тата чылаи пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Мартӑн 10-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 98 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 49 самолетне персе ӳкернӗ.

МАРТӐН 12-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Мартан 12-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ПРОСКУРОВ хули енче ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта туртса илнӗ. Вӑл шутра — НЕМИРЕНЦЫ, БРОНЕВКА, ПЕТРИКОВЦЫ, МАЛАШОВЦЫ, МАЦКОВЦЫ, МАЛИНИЧИ, НИЖНИЕ ВОЛКОВЦЫ, ОРЛИНЦЫ, ХОДЬКОВЦЫ, ЗАРУДЬЕ. Пирӗн ҫарсем ПРОСКУРОВПА ГУСЯТИН хушшинчи чугун ҫула татнӑ.

УМАНЬ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем наступление ҫаплах ӑнӑҫлӑ аталантарса пынӑ, Одесса облаҫӗнчи район центрне—ГАЙВОРОН хулине, Винница облаҫӗнчи ТЕПЛИК тата ДЖУЛИНКА район центрӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑсса халӑх пурӑнакан ытти 60 пункта йышӑннӑ. Вӑл шутра — КИТАЙ-ГОРОД, ГРАНОВ, МИХАЙЛОВКА, ЧЕЧЕЛИВКА, КУБЛИЧ, ВЕЛИКАЯ МОЧУЛКА, МЫШАРОВКА, ШЛЯХОВА, КАМЕННАЯ КРИНИЦА, ОЛЬХОВАТА ятлӑ пысӑк ялсем тата ИВАНГОРОД, РОСКОШЕВКА, МАРКОВКА, КУБЛИЧ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

КИРОВОГРАД хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла тапӑнса пынӑ, Киев облаҫӗнчи МОКРАЯ КАЛИГОРКА район центрне туртса илнӗ тата халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — ПЕТРАКОВКА, ЛИСИЧЬЯ БАЛКА, СУХАЯ КАЛИГОРКА, АНТОНОВКА, ЯНОПОЛЬ, ДУКОВА, ОСИТНАЯ, ЕЛЕНО-КОСОГОРОВКА, ПЕТРОПИЛЬЕ ятлӑ пысӑк ялсем.

КРИВОЙ РОГ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Кировоград облаҫӗнчи район центрне— ШЕВЧЕНКОВО хулине тата ДОЛИНСКАЯ чугун ҫул узелне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑсса халӑх пурӑнакан ытти 50 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — НОВО-САВИЦКОЕ, НОВО-ГРИГОРЬЕВКА, БЕРЕЗОВКА, ПЕРЕПЕЛИЦА, МАРФОВКА, СЕРГЕЕВКА, ДМИТРИЕВКА, НОВОСЕЛЬЕ, МЕДОВА ятлӑ пысӑк ялсем тата ПИСАНКИ, НОВО-ДАНИЛОВКА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

АПОСТОЛОВО хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, НИКОЛАЕВ облаҫӗнчи ПРИВОЛЬНОЕ (ИНГУЛ шывӗн хӗвеланӑҫ енчи ҫыранӗнче) тата БОЛЬШАЯ АЛЕКСАНДРОВКА район центрӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 60 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра—СОФИЕВКА, УЛЬЯНОВКА, МАЙОРОВКА, ЛЕЛИНО, НОВО-ПРИВОЛЬНОЕ, МАЛАЯ АЛЕКСАНДРОВКА, НОВАЯ КУБАНЬ, НОВО-СИБИРСК, СВОБОДНЫЙ, ДРУЖНЫЙ, ВОЛОДЬЕВКА, ЛЬВОВО, ТЯГИНКА ялӗсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Мартӑн 11-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 58 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 35 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Проскуров хули енче пирӗн ҫарсем, малалла тапӑнса пырса, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та халӑх пурӑнакан вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ темиҫе пункта туртса илнӗ. Малиничипе Нижние Болковцы ятлӑ ялсене туртса илсе, совет чаҫӗсем Проскуровпа Гусятин хушшинчи чугун ҫула татнӑ. Нимӗҫсене ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем кӳреҫҫӗ. Пирӗн боецсем пӗр участокра кӑна 1.200 гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ, пӗр йывӑр танк, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 2 тупӑ, 9 зенитнӑй тупӑ, ҫар хатӗрӗсем тиенӗ 100 лав ытла тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Кун каҫа тӑшманӑн 40 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ытла персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ.

* * *

Умань хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫаплах ӑнӑҫлӑ наступлени туса пынӑ. Пирӗн танкистсемпе пехотинецсем, вирлӗн атакӑласа, Винница облаҫӗнчи Южный Буг шывӗн сулахай енчи Джулинка район центрне [illegible] ҫӗмӗрсе тӑкнӑ нимӗҫ чаҫӗсен юлашкийӗсене шыв хӗррине хӗссе [illegible] нимӗҫсем Буг шывӗнче путса вилнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн [illegible] вилли выртса юлнӑ. 35 танк, 2.000 автомашинӑна яхӑн тата ытти трофейӗсем те нумай тытса илнӗ. Ҫитӗнӗве малалла аталантарса пырса, пирӗн ҫарсем пӗр кун каҫа 30 километр ытла малалла куснӑ, Одесса облаҫӗнчи район центрне—Гайворон хулине штурмласа тытса илнӗ. Ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса Винница облаҫӗнчи Теплик район центрне тата халӑх пурӑнакан ытти пунктсене туртса илнӗ. [illegible] каялла чакакан нимӗҫсем хӑйсен вӑрҫӑ техникине, хӗҫпӑшалне тата тӗрлӗрен ҫар пурлӑхне темӗн чухлӗ пӑраха-пӑраха хӑвараҫҫӗ.

* * *

Кировоград хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла тапӑнса пынӑ. Пӗр соединени чаҫӗсем, ӑста маневр туса, Киев облаҫӗнчи Мокрая Калигорка район центрне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти пунктсене чылай йышӑннӑ. Пӗр ялшӑн пынӑ ҫапӑҫура пирӗн боецсем гитлеровецсене пӗр батальон таран пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсен 4 юсавлӑ танкне тата горючи тиенӗ 20 автомашинине тытса илнӗ.

* * *

Кривой Рог хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем ҫӗрле Шевченково хулине тата Долинская чугун ҫул узелӗн территорине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Хаяр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн паян ҫав хулана тата ҫав чугун ҫул узелне нимӗҫсенчен тасатнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче темиҫе ҫӗр тӑшман вилли выртса юлнӑ. Ҫар хатӗрӗсем тиенӗ темӗн чухлӗ вагонпа платформа тытса илнӗ. Аркатса тӑкнӑ тӑшмана хӑваласа пырса, пирӗн ҫарсем Писанки, Ново-Даниловка чугун ҫул станцийӗсене тата халӑх пурӑнакан ытти 50 пункта ытла йышӑннӑ.

* * *

Апостолово хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, Ингул шывӗ хӗррине тухнӑ. Пирӗн понтонерӗсемпе саперӗсем, тӑшман персе тӑнине пӑхмасӑрах, темиҫе тӗлте шыв урлӑ каҫусем хывнӑ. Совет чаҫӗсем Ингул урлӑ каҫнӑ та, вирлӗн пырса ҫапса, Николаев облаҫӗнчи Привольное район центрне туртса илнӗ. Ҫитӗнӗве аталантарса пырса, пирӗн гвардеецсем Ингул шывӗн хӗвеланӑҫ енче халӑх пурӑнакан ытти чылай пунктсене йышӑннӑ. Нимӗҫсенчен 8 танк, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 9 тупӑ, 23 хир тупӑ, 18 миномет, 125 пулемет, 90 автомашина, 120.000 патрон, 10.000 мина, 18.000 снаряд тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Тыткӑна чылай илнӗ. Апостолово хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем тӑшмана Николаев облаҫӗнчи Большая Александровка ятлӑ район центрӗнчен сирпӗтсе кӑларнӑ. Ҫак районра тӑшманӑн пысӑк колоннине аркатса тӑкнӑ. Хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 3 тупӑ, 17 хир тупӑ, 8 бронетранспортер тата тӗрлӗрен ҫар хатӗрӗсем тиенӗ 60 автомашина ытла тытса илнӗ.

* * *

Баренц тинӗсӗнче пирӗн карапсем тӑшманӑн 7.000 тонна шывӗ кайнӑ суднине шыва путарнӑ. Унсӑр пуҫне тата совет летчикӗсем нимӗҫсен 6.000 тонна таякан суднине путарнӑ.

* * *

Могилев облаҫӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗсем пӗр уйӑх хушшинче тӑшман ҫарӗсен 100 эшелонне ытла ӳпӗнтерсе янӑ. 74 паровоз тата ҫар хатӗрӗсем турттарса пыракан 800 вагонпа платформӑна яхӑн ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ. Ҫав крушенисенче нумай гитлеровец пӗтнӗ. Совет патриочӗсем пӗр районра тӑшманӑн 4 бензин складне ҫунтарса янӑ, вӑл складсенче 600 тонна ытла бензин пулнӑ.

Фашистла нимӗҫ захватчикӗсем тата вӗсемпе пӗр каварлисем тунӑ тискер ӗҫсене тата вӗсем Совет Союзӗн гражданӗсене, колхозсене, обществӑллӑ организацисене кӳнӗ сиене тӗпчесе палӑртас тӗлӗшпе ӗҫлекен Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси пӗлтерни

Гитлер правительстви тата Германин ҫар командованийӗ советӑн тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисемпе мирлӗ гражданӑсене вӗлерме хушса панӑ директивӑсемпе приказсем

1. Гитлеровецсем совет ҫыннисене вӗлерме хушса панӑ вӑрттӑн приказсем

Гитлерӑн преступникла правительстви тата Германи ҫарӗн верховнӑй командованийӗ Совет Союзӗ ҫине пуҫтахлӑн тапӑнничченех совет халӑхӗн малта тӑракан пайне тискеррӗн пӗтерме тата нумай миллионлӑ совет ҫыннисене Германие каторгӑллӑ ӗҫе хӑваласа каймалла тӗплӗн шутласа плансем тунӑ.

Фашистла нимӗҫ захватчикӗсем Краснодар, Ставрополь, Орел, Сталино, Смоленск тата Киев хулисенче тунӑ тискер ӗҫсем ҫинчен Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси пӗлтернисем, ҫавӑн пекех тата Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комиссин членӗсем ятарласа вырӑнсене тухса тӗрӗслевисем нимӗҫ оккупанчӗсен тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисене тата мирлӗ совет гражданӗсене массӑллӑн вӗлерсе пӗтерес тӗлӗшпе малтанах шутласа тунӑ плансем пулнине кӑтартса параҫҫӗ.

Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси **малтанлӑха** хисепе илнӗ тӑрӑх кӑна, фашистла нимӗҫ оккупанчӗсем хӑйсем оккупациленӗ совет районӗсенче старикӗсене, хӗрарӑмсене тата ачасене — мирлӗ совет халӑхӗсене «душегубка» текен машинӑсенче тата ытти майсемпе 2 миллион ҫынна яхӑн асаплантарса вӗлернӗ, ҫавӑн пекех тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисене — Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе офицерӗсене те нумай вӗлерсе пӗтернӗ.

Хальхи вӑхӑтра Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комисси аллинче совет органӗсем Киев хулинче нимӗҫсенчен тытса илнӗ документсем пур. Вӗсене Киев хулине нимӗҫсем оккупациленӗ тапхӑрта гестапо вырнаҫнӑ ҫуртри шкапра тупнӑ. Акӑ мӗнле документсем вӗсем: Германи ҫарӗн верховнӑй командованийӗн, империн Хӗвелтухӑҫӗнче оккупациленӗ облаҫсен министрӗн, хӑрушсӑрлӑх полицийӗпе СД начальникӗн оперативнӑй приказӗсемпе ытти документсем. Вӗсенче советӑн тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисен тата мирлӗ гражданӑсен лагерӗсене «шанчӑксӑр» ҫынсенчен «тасатмалли» йӗркесене ҫырса кӑтартнӑ. Вӑл документсенчен ҫакӑ палӑрать: нимӗҫсен фашистла влаҫӗсем лагерьсене «тасатнӑ» ҫӗрте усӑ курнӑ пӗртен-пӗр меслет — ҫынсене калама ҫук йышлӑн вӗлерсе пӗтересси пулнӑ. Ҫавӑн пек тунине документсенче ҫак сӑмахсемпе ҫырса хунӑ: «экзекуци», «уйрӑм режим», «пӗтерсе тасатни», «уйрӑм мерӑсем», «тасатмалли мероприятисем». Асӑннӑ документсене нимӗҫ захватчикӗсем ССР Союзӗ ҫине тапӑнса кӗнӗ пирвайхи уйӑхсенче, 1941 ҫулхи июль—декабрь уйӑхӗсенче кӑларнӑ. Вӑл документсен пӗлтерӗшне кирлӗ документсем вырӑнӗнче кашни документ ҫинех «государствӑшӑн кирлӗ, вӑрттӑн», «вӑрттӑн, командӑшӑн документ» тесе ҫырнисем усӑ кӑтартса параҫҫӗ.

Нимӗҫсен фашистла пуҫкасакансен преступленийӗсене тата вӗсен [illegible] лӑхне пӗтермелли юнлӑ планӗсене палӑртма май паракан ҫав документсене Хӗрлӗ Ҫар тытса илессинчен хӑрас шутпа приказсем кӑларнӑ. Нимӗҫ полицийӗн начальникӗ 14-мӗш номерлӗ оперативнӑй приказра ҫапла ҫырнӑ:

«8-мӗш тата 1-мӗш номерлӗ оперативнӑй приказсене тата ҫав вӗсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе пӗлтернисене хӑрушлӑх пулсан часах пӗтерсе тӑкма хушатӑп».

Германи ҫарӗн верховнӑй командованийӗн ставки 1941 ҫулхи октябрӗн 7-мӗшӗнче кӑларнӑ 11-мӗш номерлӗ приказра ҫапла каланӑ:

«Ҫак приказа (унӑн уйрӑм пайӗсене те) хут ҫине ҫырса сарма юрамасть. Округсенчи комендантсем тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисен тата лагерь комендантӗсене сӑмах вӗҫҫӗн кӑна паллаштармалла...

2. Советӑн тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисене тата мирлӗ гражданӑсене массӑллӑн вӗлерсе пӗтерме хатӗрлени

Тупнӑ документсенчен ҫакӑ палӑрать: Гитлерӑн пуҫкасаканӗсем, СССР ҫине тапӑнничченех, хӑйсен планӗсем тӑрӑх вӗлерсе пӗтерме палӑртнӑ ӗҫре пыракан совет работникӗсен списокӗсене тата вӗсене шырамалли кӗнекесене тунӑ, вӗсем ҫинчен хӑйсене кирлӗ сведенисене пухнӑ. Гитлеровецсем, СССР-ти халӑхсен малта тӑракан пайне пӗтерес тӗлӗшпе хӑйсен ӗҫне ҫӑмӑллатас шутпа, «ССР Союзӗнче розыск тумалли уйрӑм кӗнеке», «Германин розыск тумалли кӗнеки», «Ӑҫта пурӑннине шыраса тупмалли списоксем» тата ҫавӑн пек ытти «розыск кӗнекисемпе списоксем» туса хатӗрленӗ.

«Хӑрушсӑрлӑх полицийӗн тата СД начальникӗн 8-мӗш номерлӗ оперативнӑй приказӗ ҫумне хушса ҫырнӑ 2-мӗш номерлӗ хутра» (ун ҫине «Берлин, 1941 ҫулхи июлӗн 17-мӗшӗнче кӑларнӑ» тесе палӑртнӑ тата вӑл документсене ҫав вӑхӑтра Гиммлер заместителӗн обязанноҫӗсене тӑваканӗ Гейдрих алӑ пуснӑ) списоксемпе шырамалли кӗнекесем ҫителӗксӗр пулнине тата ҫынсене вӗлерекенсен пуҫарулӑхне чарма кӳме кирлӗ маррине палӑртнӑ.

Документра ҫапла ҫырнӑ:

«Сирӗн умра тӑракан задачӑсене пурнӑҫа кӗртме командӑсене пособисем пама май ҫук. «Германин розыск кӗнеки», «Ҫынсем ӑҫта пурӑннине шыраса тупмалли списоксем», «ССР Союзӗнче розыск тумалли уйрӑм кӗнеке» хӑшпӗр чухне кӑна усӑллӑ пулма пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа та «ССР Союзӗнче розыск тумалли уйрӑм кӗнеке» ҫителӗксӗр пулса тӑрать, мӗншӗн тесен унта хӑрушӑ тесе шутлама тивӗҫлӗ вырӑссен пӗр пайне кӑна кӗртнӗ».

Гитлеровецсем Совет Союзне вӑрӑ-хурахла тапӑнса кӗнӗ тата чылай совет районӗсене оккупациленӗ хыҫҫӑн совет ҫыннисене, уйрӑмах унӑн малта тӑракан активлӑ ҫыннисене, хӑйсен аллинче пулнӑ списоксене пӑхӑнмасӑрах тӑтӑшах вӗлерсе пынӑ.

Нимӗҫ оккупанчӗсем хӑйсен преступникла планӗсене пурнӑҫа кӗртме вӑл вӑхӑтра Германин Польша генерал-губернаторстви текен территорийӗнче тата оккупациленӗ совет территорийӗнче тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисен ятарлӑ тата урӑх ҫӗре ӑсатса тӑмалли лагерӗсенче «зондеркомандӑсем» (уйрӑм командӑсем) тунӑ.

Хӑрушсӑрлӑх полицийӗпе СД начальникӗн 8-мӗш номерлӗ оперативнӑй приказӗнче (ун ҫине: «Берлин, 1941 ҫулхи июлӗн 17-мӗшӗ Б. № 21 Б 41. г. Рс IV А I ц» тесе ҫырнӑ тата Гейдрих алӑ пуснӑ) ҫапла ҫырнӑ:

«Тепӗр территорире вырнаҫнӑ тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисен лагерӗсем валли халех пӗр СС фюрертан тата 4—6 рядовойран тӑракан командӑсем уйӑрма хушатӑп. Умма лартнӑ задачӑсене пурнӑҫа кӗртме вӑйсем ытларах кирлӗ пулсан, ун ҫинчен ҫийӗнчех мана пӗлтермелле...

...Лагерьсене тасатас ӗҫе ҫӑмӑллатма тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисен Хӗвелтухӑҫ Пруссири 1-мӗш ҫар округӗнчи лагерьсен начальникӗ фон Гинденбург генерал-майор тата тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисен генерал-губернаторстври лагерӗсен начальникӗ Герготт генерал-лейтенант аллине ҫыхӑну ӗҫне ертсе пыма пӗрер ҫын уйӑрса памалла...

Ҫыхӑну ӗҫне ертсе пыма халех ҫаксене ямалла:

а) криминальрат Шиффера, государство полицийӗн Штетинри отделӗ,—генерал-майор фон Гинденбург патне,—Кенигсберг хулине (Пруссине) ярас;

б) хӑрушсӑрлӑх тата СД полицийӗн Краков хулинчи начальникӗ ҫумӗнчи криминалькомиссар Рашвитца — генерал-лейтенант Герготт патне, Кельцаха ярас.

...Ҫыхӑну ӗҫне ертсе пыракан ҫак руководительсен задачисен шутне, уйрӑмӑнах операцисем пуҫланас умӗн, командӑсен ӗҫне ҫак директивӑсемпе килӗшӳллӗн йӗркелесе пырасси тата ҫар органӗсемпе лайӑххӑн ҫыхӑнса тӑрассине йӗркелесси кӗрет».

Хӑрушсӑрлӑх полицийӗн тата СД начальникӗн 14-мӗш номерлӗ оперативнӑй приказӗ ҫумне хушса ҫырнӑ 1-мӗш номерлӗ хутра (ун ҫине — государствӑшӑн кирлӗ, вӑрттӑн, 15-мӗш экземпляр, «Берлинра 1941 ҫулхи октябрӗн 29-мӗшӗнче кӑларнӑ» тесе ҫырнӑ) «зондеркомандӑсем» тумалли йӗркесене кӑтартса панӑ:

«Зондеркомандӑсене, хӑрушсӑрлӑх полицийӗпе тата СД-на хӑрушсӑрлӑх полицийӗпе СД начальникӗ хӗҫпӑшаллӑ вӑйсен верховнӑй командованийӗпе 1941 ҫулхи октябрӗн 7-мӗшӗнче килӗшнӗ тӑрӑх тумалла.

Командӑсем, хӑйсене пӗтӗмӗшле директивӑсемпе панӑ уйрӑм полномочисем ҫине тайӑнса, лагерьти йӗркесене пӑсмасӑр, хӑйсем тӗллӗн ӗҫлеҫҫӗ. Пуриншӗн те панӑ пулса тӑрать, командӑсем лагерьсен комендантӗсемпе тата контрразведка офицерӗсемпе тачӑ ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ».

Ҫакӑ вӑл 1941 ҫулхи июлӗн 17-мӗшӗнче кӑларнӑ директивӑна иккӗмӗш хут ӑнлантарса пани пулать.

Германи ҫарӗн верховнӑй командованийӗ те 1941 ҫулхи октябрӗн 7-мӗшӗнче кӑларнӑ приказ ҫумне хушса кӑларнӑ 2-мӗш номерлӗ хутра ҫапла кӑтартса панӑ:

«1. ...Хӑрушсӑрлӑх полицийӗн «зондеркомандисем» арми тылӗнчи урӑх ҫӗре ӑсатса тӑмалли лагерьсенче шанчӑксӑр ҫынсене палӑртас тӗлӗшпе ҫакӑнта кӑтартса панӑ директивӑсемпе килӗшӳллӗн, хӑйсен ответлӑхне туйса, ӗҫлемелле.

2. Хӑрушсӑрлӑх полицийӗн тата СД начальникӗпе килӗшнӗ тӑрӑх, ҫакӑнта зондеркомандӑсен ӗҫӗсене ҫапла майпа йӗркелесе пымалла: а) ҫак задачӑсене пурнӑҫа кӗртме тунӑ зондеркомандӑсем, «а» текен отношенипе ярса панӑ 1941 ҫулхи июнӗн 28-мӗшӗнче килӗшӳ тӑрӑх, хӑрушсӑрлӑх полицийӗпе СД начальникӗн арми тылӗн командующийӗ ҫумӗнчи уполномочнӑйӗсене пӑхӑнаҫҫӗ... д) арми тылӗнчи зондеркомандӑсем туллӑшӗнпе тасатма [illegible] килмен лагерьсенче комендантсен ответлӑхӗнче халичченех пулнӑ йӗркесемпе [illegible]. Зондеркомандӑсем пырсан, шанчӑксӑр ҫынсене палӑртасси вӗсен ӗҫлӗ вӗсен задачи пулса тӑрать».

Хӑрушсӑрлӑх полицийӗнче СД начальникӗ 1941 ҫулхи октябрӗн 29-мӗшӗнче зондеркомандӑсем организацилесси ҫинчен панӑ приказра Красногвардейскри, [illegible], Киеври, Николаеври тата [illegible] формациллӗ йӗркепе» Рига, Могилев, Кривой Рог хулисенчи оперативнӑй [illegible] ярса панӑ.

Ҫакна та палӑртас пулать: гитлеровецсем Мускав патне тапӑнса пынӑ чухне Смоленск хулинче ятарласа «Мускав зондеркоманди» тунӑ. Вӑл зондеркомандӑн задачи — Мускавра пурӑнакан халӑхсене массӑллӑн вӗлерсе пӗтересси пулнӑ.

«Зондеркомандӑсем» ҫине хунӑ задачӑсем ҫинчен хӑрушсӑрлӑх полицийӗпе СД начальникӗ кӑларнӑ 8-мӗш номерлӗ приказӗпе пӗрле янӑ оперативнӑй директивӑсем (вӗсем ҫине «Берлин, 1941 ҫулхи июлӗн 17-мӗшӗ» тесе ҫырнӑ) каласа параҫҫӗ. Вӑл директивӑсенче, гражданӑсене тата Хӗвелтухӑҫӗнчи походра тыткӑна илнӗ ҫар ҫыннисене тасатас ятпа, ҫапла каланӑ:

«Хӗвелтухӑҫӗнчи походӑн уйрӑмлӑхӗсем уйрӑм мерӑсем йышӑнма хушаҫҫӗ, вӑл мерӑсене пӗтӗм ответлӑха туйса, мӗнле те пулин бюрократла тата администратвлӑ туйӑмсене пӑхӑнмасӑр, пурнӑҫа кӗртмелле».

Документсем тӑрӑх ҫакна палӑртнӑ: «зондеркомандӑсене» «тасатас» ӗҫе тума [illegible] калаҫан, малашнехи вӑхӑтра вӗлерсе пӗтермелли «шанчӑксӑр» ҫынсене тупма хушнӑ.

Ҫакна май, Гейдрих 1941 ҫулхи июлӗн 17-мӗшӗнче кӑларнӑ 8-мӗш номерлӗ оперативнӑй приказ ҫумне хушса ҫырнинче ҫапла каланӑ:

«Вырӑссем валли тунӑ лагерьсене тытса хунӑ ҫынсене лагерь ӑшӗнче ҫакӑн пек ушкӑнсемпе уйӑрмалла:

1) Гражданӑсем.

2) Салтаксем (вӑл шутра гражданӑсен тумтирне тӑхӑннисем те).

3) 1-мӗш тата 2-мӗш категорисенчи ҫынсем хушшинчи политика тӗлӗшӗнчен сиенлисем...

4) 1-мӗш тата 2-мӗш категорисенчи шанма юрахлисем, ҫавна пула вӗсене оккупациленӗ районсене йӗркене кӗртес ӗҫре вӗсемпе усӑ курма юрать.

5) Тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисемпе гражданӑсем хушшинчи нациллӗ ушкӑнсем».

3. Совет деятелӗсемпе совет интеллигенцийе пӗтермелли плансем

Фашистла нимӗҫ захватчикӗсем вӑхӑтлӑха тытса илнӗ совет районӗсенчи гражданла халӑха (кун ҫинчен пӗрре кӑна мар пӗлтернӗ ӗнтӗ) тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисемпе танах лагерьсене хупса лартнӑ. Ҫак ӗҫе вӗсем вӑрҫӑ вӑрҫмалли мӗнпур законсемпе йӑлисене пӑсса тунӑ. Гитлерла палачсем тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисем валли туса хунӑ этемле мар режимпа мирлӗ совет гражданӗсем тӗлӗшпе те пӗр пекех усӑ курнӑ. Ку тӗлӗшпе «экзекуци» текен йӗркепе палӑртмалла.

Гитлеровецсем малтанхи кунсенчех пуҫласах ҫынсен йышлӑ ушкӑнне шанчӑксӑррисем тесе палӑртса хунӑ, вӗсене «экзекуци» тума тивӗҫлӗ тенӗ. Ҫав шута гитлеровецсем пуринчен малтан совет работникӗсен ертсе пыракан тата активлӑ ушкӑнне кӗртнӗ. Хӑрушсӑрлӑх полицийӗн начальникӗ Гейдрих 1941 ҫулхи октябрӗн 29-мӗшӗнче алӑ пуснӑ 14-мӗш номерлӗ оперативнӑй приказ ҫумне хушса ҫырнӑ 1-мӗш номерлӗ хутра ку тӗлӗшпе ҫакӑн пек каланӑ:

«Пуринчен малтан ҫаксене шыраса палӑртмалла:

1) Государствӑн тата партин уйрӑм пайӗсенче палӑрса тӑракан ӗҫлӗ ҫыннисене [illegible]

(Юлашки 2-мӗш страницӑра).

Фашистла нимĕç захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем тунă тискер ĕçсене тата вĕсем Совет Союзĕн гражданĕсене, колхозсене, обществăллă организацисене кӳнĕ сиене тĕпчесе палăртас тĕлĕшпе ĕçлекен Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси пĕлтерни

Гитлер правительстви тата Германин çар командованийĕ советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе мирлĕ гражданcене вĕлерме хушса панă директивăсемпе приказсем

(Юлашки)

пурне те, уйрăмах профессиональнăй революционерсене,

2) Коминтерн деятелĕсене,

3) ССР Союзĕнчи нимĕçсен коммунистла организацийĕн мĕнпур паллă деятелĕсене тата Центральный Комитетри, округсемпе районсенчи организацисенчи нимĕçсен коммунистла организацийĕн деятелĕсене,

4) мĕнпур Халăх Комиссарĕсемпе вĕсен заместителĕсене,

5) Хĕрлĕ Çарта политкомиссарсем пулнă çынсене пурне те,

6) Центри тата вăтам звенори государство учрежденийĕсен ертсе пыракан çыннисене,

7) хуçалăх пурнăçĕнчи ертсе пыракан çынсене,

8) вырăссен совет интеллигенчĕсемпе еврейсене, вĕсем профессиональнăй революционерсем е политика деятелĕсем пулса тăнă пирки, писательсене, редакторсене, Коминтерн работникĕсене тата ыттисене те».

«Хăрушсăрлăх полицийĕпе СД командисем валли панă директивăсем çумне хушса каланинче», Гейдрих алă пуснăскерĕнче, «Берлинра, 1941 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче» кăларнăскерĕнче, çӳлте асăннă мерăсене вырăс халăхĕ тĕлĕшпе кăна мар, çавăн пекех тата украинецсем, белоруссем, азербайджанецсем, армянсем, грузинсем, тюрк халăхĕсем тата ыттисем тĕлĕшпе те йышăнма кирлине тӳрремĕнех кăтартса панă.

Çакна палăртмалла: гитлеровецсем Украинăри националистсене те, Гитлер малтан вĕсемпе Совет Союзне хирĕç кĕрешнĕ çĕрте усă курнăскерсене, прсĕррĕн те тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ, вĕсене «бандеровецсем пăлхав тума хатĕрленнĕ» тесе айăпланă. Хăрушсăрлăх полицин оперативнăй командине панă II/5 директивăра тата СД командине 1941 çулхи ноябрĕн 22-мĕшĕнче панă 812/41 номерлĕ директивăра, «государство тĕлĕшĕнчен паха шулса тăракан секретлă хут» тесе палăртнăскерĕнче, сăмахран, Украинăри бандерăпа ертсе пыракан националистсем тĕлĕшпе çапла каланă:

«Бандера движенийĕнчи мĕнпур активистсене çийĕнчех арестлемелле те тĕплĕн допрос тунă хыççăн, вĕсем вăрă-хурахсем тесе, пĕр шавсăр вĕлермелле....»

Ку документпа паллашнă хыççăн ăна команда начальствин çийĕнчех пĕтерсе тăкмалла» (подлинникра аялтан туртса палăртнă).

Влаçра тăракан гитлерла ушкăн «шанчăксăррисене» тупса палăртас тĕлĕшпе панă хăйĕн директивисем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăнă, вĕсене çирĕп те тулли шута илсе пыма хушнă. Хăрушсăрлăх полицийĕпе СД начальникĕ панă 8-мĕш номерлĕ оперативнăй приказ çумне 2-мĕш номерпе хушса çырнинче çапла каланă:

«Оперативнăй командăн начальникĕ империн хăрушсăрлăхĕн Главнăй управленине телеграфпа е васкавлă çырупа кашни эрнерех кĕске донесени парса тăма тивĕçлĕ. Çав донесенире çаксене кăтартса памалла: 1) иртнĕ эрнере мĕн туса ирттернине кĕскен çырса кăтартмалла; 2) татăклăнах шанчăксăр тесе шутлама тивĕçлĕ çынсен хисепне (цифра кăтартса пани те çителĕклĕ)...»

Документсенчен çакă курăнса тăрать: çав «экзекуцисем» совет çыннисене вĕлерсе пĕтермелли майсем кăна пулнă. Фашистла нимĕç палачĕсем, çав майсемпе усă курса, совет çыннисене йышлăн асаплантара-асаплантара вĕлернĕ

4. Нимĕçсен фашистла çынвĕлеренĕсем хăйсен преступленийĕсене пытарса хăварма хăтланни

Нимĕçсен фашистла тискер-кайăкĕсем аллине лекнĕ совет çыннисене этемле мар тискеррĕн асаплантарса вĕлерсе, Германи влаçĕсем çав преступленисене, пысăк вăрттăнлăхпа туса, пур майсемпе те пытарса хăварма хăтланнă. Çакна ăна çавăн пекех нимĕçсен çар командованийĕпе нимĕç полицийĕн нумай тĕрлĕ приказĕсем кăтартса параççĕ.

Хăрушсăрлăх-полицийĕпе СД начальникĕн 1941 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче панă 8-мĕш №-лĕ оперативнăй приказĕнче ку тĕлĕшпе çакăн пек кăтарту панă:

«Экзекуцисене лагерьте мар е ун çывăхĕнчи вырăнта мар туса ирттермелле, вĕсене май килнĕ таран палăрмалла мар, вăрттăн туса ирттермелле».

Малалла çав приказ çумнех хушса çырнă 2-мĕш №-лĕ хутра çапла каланă.

«Экзекуцисене лагерьте е лагерьтен питĕ çывăх вырăнта мар туса ирттермелле. Генерал-губернаторствăн лагерĕсем границăран питĕ çывăх вырăнта тăраççĕ пулсан, тыткăна лекнисене пирпейлеме, май килнĕ таран, ĕлĕк совет районĕсем пулнă вырăнсене илсе каймалла. Экзекуцисене лагерьти дисциплинăна пăснă пирки туса ирттерме лекнĕ пулсан, кун пек чухне оперативнăй команда начальникĕн çав ĕç пирки лагерь комендантĕнчен ыйтса пĕлмелле».

Германи çарĕн верховнăй командовани ставки 1941 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнче кăларнă 11-мĕш №-лĕ приказ çумне хушса çырнă 2-мĕш №-лĕ хутра çапла каланă:

«б) зондеркомандăсен ĕçĕ арми тылĕн командующийĕ (тыткăна лекнĕ çар çыннисем тĕлĕшпе ĕçлекен районри комендант) хушнă тăрăх çакăн пек пулса пымалла: тыткăна лекнĕ çар çыннисене май килнĕ таран систермесĕр суйласа тухмалла, вĕсене пĕтерессине вара пĕр кая хăвармасăр тата пересыльнăй лагерьсемпе халăх пурăнакан пунктсенчен аяккарахри вырăнта, тыткăна лекнĕ ытти çар çыннисем е вырăнти халăх сисмелле мар туса ирттермелле».

Хăрушсăрлăх полицийĕпе СД начальникĕ кăларнă 14-мĕш №-лĕ оперативнăй приказ çумне хушса çырнă 1-мĕш №-лĕ хутра (ун çине «Берлин, 1941 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕ, № 21 Б/41 г. РС—IV А I Ц, государство тĕлĕшпе паха пулса тăракан секретлă хут» тесе çырнă) «экзекуци» енĕпе çакăн пек йĕрке тума сĕннĕ:

«Оперативнăй труппăсен начальникĕсем экзекуци ыйтăвне татса парас ӳсретлăха хăйсем çине илеççĕ тата зондеркомандăсене тивĕçлĕ кăтартусем параççĕ.

Асăннă директивăсем кăтартса панă мерăсене пурнăçа кĕртме командăсен лагерь руководствинчен тыткăна лекнĕ çар çыннисене хăйсен аллине пама ыйтмалла. Армин верховнăй командованийĕ çавăн пек требованисене тивĕçтересси пирки комендатурăсене кăтартусем панă.

Экзекуцисене систермелле мар, уллах вырăнсенче тата, кирек мĕнле пулсан та, лагерьте мар е лагерьтен питĕ çывăхри вырăнта мар туса ирттермелле. Çын виллисене çийĕнчех тата тĕрĕс пытарнине сăнаса тăни кирлĕ».

Тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕсене командировкăна ярακан хăрушсăрлăх полицийĕпе СД командийĕсене панă директивăсем çумне хушса çырнинче, Гейдрих алă пуснăскерĕнче, тата çапла кăтартса панă:

«Эпĕ сĕнĕрен çакна кăтартса паратăп: экзекуцисене, тепле пулсан та, лагерьте те, лагерьтен питĕ çывăх вырăнта та туса ирттерме юрамасть».

Вăхăт иртсе пынă май «экзекуцисем» çав тери анлăн сарăлса кайнă. Гитлеровецсем вара çав «экзекуцисене» лагерьсенчех е лагерьсем çывăхĕнчех туса ирттерме тытăннă. Çакна ăна Чрезвычайнăй Комисси халиччен панă пĕлтерӳсенче те палăртнă.

Кайрантарах, Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç кĕтĕвĕсене вĕсем вăхăтлăха оккупациленĕ совет территорийĕ çинчен тасатма пуçласан, совет влаçĕсем фашистла ирсĕрсен çав тери тискер преступленийĕсене тăрă шыв çине кăларма тытăнсан, фашистсем вĕлернĕ совет гражданĕсен, боецĕсемпе офицерĕсен виллисене пытарнă нумай вырăнсене тупса палăртсан, Германи çарĕн командованийĕ, хăйĕн преступленийĕн йĕрĕсене пытарса е пĕтерсе хăварас тесе, васкавлă мерăсем йышăннă. Çав шутпа нимĕç командованийĕ çын виллисене пытарнă масарсене пур çĕрте чавса кăларса, вилесене çунтарса ярас ĕçе организацилеме тытăннă. Обершрурмфюрер жандармерии Камень-Каширскри облаçри руководительне панă уйрăм приказра (приказ çине «Ровно, 1943-мĕш çулхи августăн 3-мĕшĕ, IVA 1—№ 35/43 сс» тесе палăртнă) çапла тума хушса çырнă: «Çак область тăрăх уйрăмах хытă асаплантарса вĕлернĕ çынсене пытарнă масарсем ăçтине тата вĕсем мĕн чухлине халех пĕлтермелле», тенĕ.

Ровно облаçĕнчи гестапо çуртĕнче тупнă документсем хушшинче çӳлте асăннă приказа пурнăçа кĕртни çинчен калакан донесенисене тупнă. Çав донесенисенче çынсене йышлăн вĕлерсе пытарнă 200 пункта яхăн шута илсе кăтартса панă. Çав списоксенчен çакă курăнать: фашистла нимĕç палачĕсем хăйсем вĕлернĕ çынсене пытарма ахаль çынсем сахал çӳрекен уллахрах вырăнсене суйласа илме ытларах тăрăшнă. Акă çав вырăнсенчен хăшпĕрисем:

78. Шепетовка, вăрманта—3 масар.

79. Славута, грави кăларнă вырăнта — 1 масар.

80. Славута, вăрманта — 1 масар.

121. Горохов, Гороховран пĕр километр кăнтăртарахра, Дрешкополь çулĕнчен 100 метр аякра—1 масар.

Хула масарĕ çинче, хĕвеланăç енчи кĕтесре—1 масар.

Гороховран кăнтăртарахра кирпĕч тума тăм илекен вырăнта—1 масар.

123. Берестечко, жандармсен казармин кантăкĕнче, Наренчин совхозĕнчен 500 метр çурçĕртерехре — 1 масар.

124. Локачи хули, хуларан 1 километр кăнтăртарахра (кирпĕч тума тăм илекен вырăнта) — 1 масар.

125. Кизелин, Кизелинтан 1 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, çурт ишĕлчĕкĕсем патĕнче — 1 масар.

140. Ковель, Нагорнăй урам, хăйăр илекен вырăнта, çурçĕрти казармăсенчен 40 метр аяккарахра—1 масар.

Нагорнăй урам, хуларан çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, хăйăр илекен вырăнта, çулăн сылтăм енче—1 масар.

Владимирски урам, еврейсен масарĕ патĕнче—1 масар.

Тĕрме садĕнче—1 масар.

Площадь урамĕнче, кивĕ масар патĕнче—1 масар.

142. Ратно, хуларан 3 километр хĕвелтухăçнерехре, çил арманĕ патĕнче —1 масар.

143. Крымно, хуларан 2 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, кӳлĕ патĕнче —1 масар.

144. Мацеев, пурă илекен вырăнта, охраннăй полицин казармисенчен 200 метр аяккарахра—1 масар.

145. Голобы, вăрманта, хуларан 4 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре — 1 масар.

146. Мельница, Мельницăран 2 километр хĕвеланăçнерехре, хăйăр илекен вырăн патĕнче—1 масар.

147. Маневичи, хуларан 2 километр çурă хĕвеланăçнерехре, хăйăр тăвĕ патĕнче—1 масар.

149. Осерани, ялтан 5 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, хăйăр илекен вырăнта — 1 масар.

Список вĕçĕнче çапла каланă: «Спискра пур масарсене те палăртнă, вăл шута ку вырăнсенче малтан ĕçленĕ командăсен масарĕсем те кĕреççĕ».

Гитлерăн çарĕ хăй каялла чакнă чухне Харьковра, Киевра, Ровнора тата ытти нумай хуласемпе районсенче нимĕç палачĕсем пере-пере пăрахнă, асаплантарса вĕлернĕ мирлĕ совет гражданĕсен тата тыткăна лекнĕ çар çыннисен виллисене вуншар пинĕн çунтара-çунтара янă.

Советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене тата мирлĕ гражданĕсене йышлăн вĕлересси çинчен калакан хăйсен директивисене мĕн чухлĕ тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслесе тухас шутпа, Гитлерăн влаçра тăракан ушкăнĕ «экзекуцисене» тӳрремĕнех туса пыракан çынсене отчетсем парса тăма хушнă.

Хăрушсăрлăх полицийĕпе СД начальникĕ хăйĕн 8-мĕш №-лĕ оперативнăй приказĕ çумне хушса çырнă 2-мĕш №-лĕ хутра зондеркомандăсен начальникĕсене çапла тума хушнă:

«Туса ирттернĕ репрессисене палăртса пыма командăсен список пулмалла, çав списоксенче çакăн пек сведенисем пулма тивĕçлĕ; йĕркерен пыракан номерсем, хушаматсемпе ятсем, хăш вăхăтра тата хăçан çурални, çар званийĕ, професси, юлашки вăхăтра ăçта пурăнни, мĕншĕн репрессилени, хăçан тата хăш вырăнта репрессилени».

Малалла приказра çапла каланă:

«Çавăн пек пĕлтерӳсене яланах, информаци парас йĕркепе, империн хăрушсăрлăхĕн Главнăй Управленийĕн IV-мĕш управленин 1-мĕш отделне парса тăмалла».

Çав директива çумне хушса, хăрушсăрлăх полицийĕпе СД-ăн оперативнăй командин çапла çырать:

«Кашни уйăхăн вĕçĕнчех тыткăна лекнĕ çар çыннисен стационарнăй лагерĕсенчи СД командисем мĕнле ĕçлени çинчен кунта отчетсем тăратмалла. Инструкцисенче кăтартса панă директивăсемпе килĕштерсе, мĕн чухлĕ çын пĕтернине национальноçсем тăрăх кăтартса памалла».

Çӳлте кăтартнă директивăсене мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен 7-мĕш оперативнăй команда 1941 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче Винница хулинче (обершрурмбанфюрер Лилер бригадфюрера Томас «доктора») панă донесени каласа парать. Çав донесенире çакна кăтартса панă: Винница хулинчи лагерьте, лагерьти çынсене суйласа «тасатнă» хыççăн, унта пĕтĕмпе те 25 çын кăна тăрса юлнă, вĕсене «шанчăксăррисен» категорине кĕртнĕ.

«Çынсем çавăн пек сахал тăрса юлнипе, — тенĕ донесенире, — çакăнпа ăнлантарса пама пулать: тыткăна лекнĕ çар çыннисен стационарнăй лагерĕсенче юрăхсăр элементсене хирĕç вырăнти органсем, комендантсемпе е контрразведкăн тивĕçлĕ офицерĕсемпе килĕштерсе, хăрушсăрлăх полицийĕ енĕпе куллен кун кирлĕ мероприятисем пурнăçа кĕртсе пынă».

Çапла вара, ятарласа тунă «зондеркомандăсем» çынсене йышлăн вĕлерсе пынисĕр пуçне, тыткăна лекнĕ совет çар çыннисем валли тунă лагерьсен комендантчĕсем те тата вĕсене пăхăнса тăракан командăсем те совет çыннисене тăтăшах тата питĕ йышлăн вĕлерсе пынă.

5. Гитлеровецсем пĕтĕм тĕнчери правăн нормисене, вăрçă туса пымалли законсемпе йăласене вăрă-хурахла пăсаççĕ

Вăрçă вăрмалли пĕтĕм тĕнчери правиласене, пĕтĕм тĕнчери тĕрлĕ конвенцисене çырса хунăскерсене тата тыткăна лекнĕ çар çыннисене этемле пăхма хушакансерсене, пăрахăçлани çинчен гитлерла вăрă-хурахсем формально нихăçан та пĕлтерхен. Кунтан та ытларах, 1934 çулта гитлерла правительство «Тыткăна лекнĕ çар çыннисене тытса усрасси çинчен» калакан 1929 çулта Женевăра йышăннă конвенцие те ратификацилени.

Анчах тыткăна лекнĕ çар çыннисем пирки калакан пĕтĕм тĕнчери конвенцисем çумне пĕрлешессине гитлерла правительство тĕнчери обществăллă пухăшпа улталас шутпа кăна туса ирттернĕ. Çакă вăл çав вăрçан пуçăлнăренпех тата гитлерла Германи ССР Союзĕ çине ирсĕррĕн тапăннă хыççăн уйрăмах уççăн палăрчĕ.

Хăрушсăрлăх полицийĕпе СД начальникĕ панă 14-мĕш №-лĕ оперативнăй приказ çумне хушса çырнă 1-мĕш №-лĕ хутра намăса пĕлмесĕр çапла каланă:

«Большевикла салтак ăна тӳрĕ кăмăллă салтак вырăнне хурса тата Женевăри конвенци кăтартнă пек пăхмалли правăна çухатнă», тенĕ.

Тыткăна лекнĕ совет çар çыннисене хирĕç тăвакан çав тери тискер ĕçсене гитлерла бандитсем, çапла ĕнтĕ, тыткăна лекнĕ çар çыннисем тĕлĕшпе йышăннă тĕнчери правиласемпе совет çыннисем тĕлĕшĕнче усă курма çук тесе калакан намăссăр сăмахсемпе витме пăхаççĕ.

Документсем тăрăх çавăн пекех тата çакна палăртнă: фашистла нимĕç командованийĕпе полицин преступникла планĕсене Польша интеллигенцийĕ тĕлĕшпе те «экзекуцисем» тата «тасатмалли мерăсем» йышăнасси, урăхла каласан, вĕсене йышлăн вĕлерсе пĕтересси кĕнĕ. Çакна ăна хăрушсăрлăх полицийĕпе СД начальникĕ панă 2-мĕш №-лĕ оперативнăй приказа вуласа тухнă хыççăн пĕр пиккелемесĕрех калама пулать. Çав приказ çинче «Берлин, 1941 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ» тесе палăртнă. Унта çапла каланă:

«Сĕнĕрен оккупациленĕ облаçсенче, уйрăмах Польша пулнă территори çинче, пурăнакан поляксем, хăйсен сыпăчĕ тăрăх, коммунистсене хирĕç те, çавăн пекех еврейсене хирĕç те ĕçлĕç.

Çавăнпа та ĕнтĕ, каламасăрах паллă, çавнашкал шухăш-кăмăллă поляксем тĕлĕшпе малтанхи вăхăтрах тасату мероприятийĕсем туса ирттермелле мар». (Чрезвычайнăй Комисси палăртнă).

«Польша интеллигенцийĕ тата ыттисем тĕлĕшпе вара, кашни уйрăм обстоятельствăна кура васкавлă мерăсем йышăнмалли сăлтав çук пулсан, тивĕçлĕ решени калараха йышăнма пулать».

Халиччен тĕпчесе палăртнă тăрăх, çавăн пек решенисене фашистла палачĕсем пĕрре кăна мар пурнăçа кĕртнĕ. Çавăн пек «тасатмалли мероприятисене», чăннипех те ĕнтĕ, нимĕç çынвĕлеренĕсем Польша офицерĕсем тĕлĕшпе Катынь вăрманĕнче туса ирттернĕ.

6. Гитлер правительствине тата Германин çар командованине — калама çук тискер преступленисем организацилекенсене — çирĕп ответ тыттармалла

Германин çар командованийĕпе полицийĕн маларах кăтартнă вăрттăн приказĕсемпе инструкцийĕсем çакна ĕнентермеллех кăтартса параççĕ: гитлеровецсен совет çыннисене йышлăн вĕлерсе пĕтерме тунă лайăх шухăшласа хунă системи пур, çав калама çук тискер преступникла тĕллевсене пурнăçламашкăн вĕсем хăйне уйрăм аппарат тунă, тĕрлĕ «оперативнăй командăсем», «зондеркомандăсем» тунă, ятарласа «суйласа тасатнă», «экзекуци» тунă, «пĕтерсе пăрнă». Çаксем вĕсем тыткăна лекнĕ совет çыннисемпе мирлĕ совет гражданĕсене йышлăн вĕлерни пулса тăраççĕ.

Çав приказсемпе инструкцисем çакăн çинчен калаççĕ:

1) фашистла нимĕç захватчикĕсем Совет Союзне хирĕç пуçласа янă вăрçăн малтанхи уйăхĕсенчех Совет Союзĕн гражданла халăхне те, Хĕрлĕ Çарăн тыткăна лекнĕ боецĕсемпе командирĕсене те йышлăн вĕлерсе пыма пуçланă;

2) халăха тата тыткăна лекнĕ çар çыннисене йышлăн вĕлерсе пыма хăрушсăрлăх полицийĕпе СД органĕсем тата Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕ хушнă, вăл ĕçе çав органсем пĕр-пĕрине килĕштерсе пурнăçа кĕртнĕ;

3) «экзекуцие» пурнăçа кĕртме «оперативнăй» командăсем тата хăйне уйрăм «зондеркомандăсем» тунă, çав командăсен çынсене персе вĕлерес ыйтăва хăйсемех татса пама пултарнă;

4) тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе гражданла халăха нимĕçсем вăрттăн персе вĕлерме тăрăшнă, тыткăна лекнĕ ытти çынсем тата ытти граждансем ун çинчен нимĕн те ан пĕлччĕр тесе тăрăшнă;

5) тыткăна лекнĕ совет çыннисене персе вĕлермешкĕн хăшпĕр чухне вĕсене ятарласа Совет Союзĕн нимĕçсем оккупациленĕ территорине илсе пыма хушнă.

Халь пичетлекен документсем, çапла ĕнтĕ, çакна кăтартса параççĕ: тыткăна лекнĕ çар çыннисене тата мирлĕ совет çыннисене пĕтерсе пыма Берлинран хушса тăнă, çав ĕçе тума Германи правительствипе Германин верховнăй командованийĕ, Хĕвелтухăçĕнчи оккупациленĕ облаçсен империн министрĕ, хăрушсăрлăх полицийĕпе СД начальникĕ тата гитлерла преступниксен шайккин ытти членĕсем те хушса тăнă.

* * *

Çак пĕлтерӳре пичетлекен материалсем тăрăх, çавăн пекех тата нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă совет районĕсенче фашистла нимĕç захватчикĕсем тунă тискер ĕçсене тĕпчесе пĕлнĕ хыççăн пичетлесе кăларнă документсем тăрăх, Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси çакна палăртнă:

1) Тыткăна лекнĕ совет çыннисене тата мирлĕ совет гражданĕсене йышлăн пĕтерсе пырас ĕçе тӳрремĕнех организацилекенсем тата ертсе пыракансем çаксем пулнă: Хĕвелтухăç Пруссири 1-мĕш çар округĕнчи тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕсен начальникĕ—майор фон Гинденбург, «генерал-губернаторствăри» тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕсен начальникĕ—генерал-лейтенант **Герггот**, сыхăну офицерĕсем — криминальрат **Шиффер**, криминалькомиссар **Рашвитц**,

2) Совет çыннисене çавăн пек тискеррĕн пĕтерсе пырас ĕçе çаксем тӳрремĕнех пурнăçа кĕртсе пынă: зондеркомандăсен, оперативнăй командăсен çыннисем, комендантсем тата лагерьсен комендатурисенче ĕçлекен çынсем, çавăн пекех тата вĕсене пулăшса тăракансем.

Совет халăхне хирĕç тунă хăйсен преступленийĕсемшĕн çав çынсем пурте çирĕп ответ тытмалла.*)

*) Центрти хаçатсем Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси пĕлтерĕвĕнче кăтартнă документсен фотоӳкерчĕкĕсене те пичетлеççĕ.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Чăрăш Шĕкĕрте мĕншĕн комсомол йышĕ ӳсмест

КАЛИНИНО. Чăрăш Шĕкĕрти «Красноармеец» колхозра комсомол йышне ӳстерсе пыма лайăх майсем пур. Унта çамрăксем нумай, вĕсенчен чылайĕшĕ колхоз производствинче стахановла ĕçлеççĕ. Ф. Винофонтов юлташ фермăсен заведующийĕ пулса ĕçлет. Вăл хăйне шанса панă ĕçе тивĕçлипе туса пырать. Çамрăк стахановец П. Николаев иртнĕ çулта уйхир ĕççисенче кăна 300 ĕçкунĕ ытла тунă.

Тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен çамрăксем татах та пур. Анчах та ВЛКСМ организацийĕ тата унăн секретарĕ П. Данилова юлташ союзра тăман çамрăксем хушшинче пичех те сӳрĕк ĕçлеççĕ. Комсомолецсем хăйсем те ĕççене кирлĕ пек хутшăнмаççĕ. И. Шаркина комсомолкăна кăçал 180 килограмм пăрса вăрлăхне алăпа суйлама хушнă пулнă. Вăл ăна суйламасăрах каялла леçсе панă.

ВЛКСМ Калинино райкомĕнче ĕçлекенсем çур çул ытла ĕнтĕ çак колхозри организацире пулман. Райкомолăн пуçламĕш организацисене пуллен ертсе пымалла.

Б. ШОРНИКОВ.

Комсомолецсем агитациллĕ-массăллă ĕçре

ИШЛЕИ. Районра пĕтĕмпе 33 агитколлектив, 31 вулав çурчĕ. 23 комсомолец вулав çурчĕсен заведующийĕсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем январь уйăхĕнче 109 хутчен лекцисемпе докладсем ирттернĕ, колхозсемпе вулав çурчĕсенче 63 номер стена хаçачĕсем кăларнă.

Уйрăмăнах Ишек ялсоветĕнчи «Знамя победы» колхозри хĕрлĕ кĕтесĕн ĕçне палăртмалла. Кунта мĕнпур ĕçе пуçламĕш комсомол организацийĕн секретарĕ Добросмыслова юлташ йĕркелесе пырать. Хĕрлĕ кĕтесре таса та тирпейлĕ. Хаçат витрини тунă, справкăсем паракан сĕтел пур. Хĕрлĕ кĕтесре драмкружок организациленĕ. Вăл уйăхра икĕ хутчен спектакльсем лартса парать. Эрнере пĕрре шашкăпа шахмăт турнирĕ пулса иртет.

Çавăн пекех Мăналти агитколлектив та лайăх ĕçлет. Агитаци ĕçне пĕлсе туса пынине пула кунта çуракине хатĕрленес ĕç лайăх пырать. Ялсовет исполкомĕн председателĕ комсомолка Николаева юлташ чи лайăх агитатор шутланать. Агитколлективра пуринчен ытла комсомолецсем. Вĕсем, агитаци ĕçне туса пынипе пĕрлех çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе Мăнал колхозне пулăшса пыраççĕ. Вĕсем уя 1.644 лав тислĕк кăларнă, 34 центнер кĕл, 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 3 вăкăра кӳлме вĕрентсе çитернĕ, кирлĕ таран вăрлăх сортланă.

И. ГРИГОРЬЕВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Адриатика тинĕсĕнче çапăлах тинĕсри операцисем пыраççĕ. Мартăн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи эсминецĕсем нимĕçсем оккупациленĕ Корчула утравĕ çинчи хуласене пенĕ (Корчула утравĕ вăл Югослави çыранĕсем патĕнче). Çав çĕрех Неретляноки пролива (Хвар утравĕн хĕвелтухăç çыранĕпе Югослави çыранĕсем хушшинче) çыранри оборонăн çăмăл карапĕсем тăшмана пĕр пĕчĕк суднине вут тивертсе янă.

Италири фронтăн мĕнпур участокĕсенче патрульсем кĕрешнĕ.

Союзниксен авиацийĕ çапăлах тăшманăн çар объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, халăха ирĕке кăларассишĕн çапăçакан çар чаçĕсем Словенири фронтăн нумай участокĕсенче тăшманпа хытă çапăçса малалла тапăнса пыраççĕ. Люблянь таврашĕнчи çапăçусенче 500 гитлеровеца вĕлернĕ, 3 бронепоезд, 2 бронемашина, пĕр танк, 11 грузовик тата боеприпас турттарса пыракан поезда пĕтерсе тăкнă. Любляны—Кочевье участокĕнче трофейăсем нумай тытса илнĕ, темиçе тĕлте чугун çул линине ишсе антарнă. Гитлеровецсен виçĕ ялти гарнизонне пĕтерсе тăкнă.

Триест таврашĕнче Словени партизанĕсем нимĕçсен 2 поездне ӳпĕнтерсе янă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăра кĕрешекен хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ: февраль уйăхĕнче американецсен Англире тата Италире тăракан самолечĕсем Германи хулисен заводĕсем тата ытти объекчĕсем çине 24.000 тонна бомба пăрахнă. Февраль уйăхĕнчех тăшманăн 905 самолетне персе ӳкернĕ. Америка авиацийĕ февральте Германин 17 авиаци заводне 20 хут, Германири тата вăл оккупациленĕ территорисенчи 20 аэродрома 22 хут тапăннă. Американецсен Англире тăракан авиацийĕн çав тапăнусенче 267 бомбардировщик пĕтнĕ. Вăл çав тапăнусенче пулнă бомбардировщиксен 2,5 процентĕ пулать. Истребительсем 70 пĕтнĕ. Ку вăл çав тапăнусенче пулнă истребительсен 1 процентĕнчен те сахалтарах пулать.

АМЕРИКĂРАН ИСПАНИЕ НЕФТЬ ТАРАТАС ЫЙТУ

Филадельфире тухса тăракан «Рекорд» ятлă хаçат: Америкăран Испание нефтьпе сĕрмелли çусем яма хатĕрленеççĕ, тесе пĕлтернĕ. Çакăн пирки пичет представителĕсем ыйту панă. Çав ыйтăва хирĕç США-н государственнăй департаменчĕ çапла ăнлантарса панă: çав ушкăн нефтьпе сĕрмелли çусене Италие яма ирĕк пани чылай пулать ĕнтĕ. Çав ирĕке пани Испание нумаях пулмасть нефть яма чарса лартнăччен пулса иртнĕ, тенĕ. (ТАСС).

КĔСКЕН

● Латин Америкинчи ĕç конфедерацийĕн съезчĕ резолюци йышăннă. Çав резолюцире съезд Америкăри мĕнпур çĕршывсенчи рабочисене те тĕнĕл держависем çĕрĕн хĕвеланăç çурчăмăрĕнче ĕçленине хирĕç пыракан кĕрешĕве татах та вăйлатма сĕнет, çавăн пекех тата хальхи Аргентина правительстви пек «правительствăсен» ĕçĕсемпе те кĕрешме чĕнет.

● Юлашки вăхăтра Латин Америкинчи çĕршывсенче Франко Испанийĕпе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахтарас тĕлĕшпе пыракан юхăм вăйланса кайнă. Франко Испанийĕпе çыхăну тытма пăрахма, сăмахран Венецуэлăри, Чилири, Кубари, Мексикăри, Уругвайри прогрессивлă организацисем ыйтаççĕ. (ТАСС).

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

СССР Наркомфинĕ панă распоряжени тăрăх, перекет кассисене 1941 çулхи июнĕн 23-мĕшĕнчен хывнă вкладсене тата вăрçă вăхăтĕнче хывнă вкладсене перекет кассисем вклад хуçисем ыйтсан пĕтĕмĕшпех е пĕр пайне кирек хăçан та пĕр чарăнса тăмасăр параççĕ.

ЧАССР-ĕнчи перекет кассисемпе Госкредит управленийĕ.

Çĕмĕрлери „Большевик“ заводăн 50—60 литр кĕрекен савăтсем хумалли 6.000 корзина сутлăх пур. Корзинăсем чугун çул çинче. Пĕр корзина 20 тенкĕ тăрать.

Заготзернон Шупашкарти пунктне вальцлă арманта ĕçлеме çакăн пек çынсем кирлĕ: вальцевойсем, масленщиксем, мотористсем, электромонтерсем, выбойщиксем тата рабочисем.

Заготзерно пункчĕн конторине пырса ыйтмалла.

2—1.

Шупашкарти табак фабрикине çакăн пек работниксем кирлĕ: пулăшуллă хуçалăх заведующийĕ, снабжени тĕлĕшпе ĕçлекен работниксем, пулăшакан рабочисем, экономист.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, Чувашская ул., дом 69, Табачная фабрика, отдел кадров.

2—1.

Çар чăçне пулăшуллă хуçалăхра ĕçлеме директор, бухгалтер, счетовод, машинистка, зоотехник, агроном кирлĕ. Вĕсене кунне виçĕ хут апат çитереççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла-Маркса, 6.

2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторан — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00380 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.